Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 67 (4636) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 12-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Июнĕн 12-мĕшĕ- Раççей Федерацийĕн патшалăх суверенитечĕ çинчен Деклараци йышăннă кун

# Бюджет - пирĕн пурнăç кислорочĕ



Ытларикун район администрацийĕнче район активĕ хутшăннипе пулнă канашлăва пĕтĕмпех район бюджетне хушăнтарас ыйтусене халалланăччĕ. Ун умĕн Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ ирттернĕ анлă ларура тăратнă ыйтусене тĕпе хурса, администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин районти предприятисемпе организацисем умĕнче бюджета йĕркелес тĕлĕшпе конкретлă задачăсем палăртрĕ. Пирĕн район бюджетăн 4 уйăхри тупăш пайне ăнăçлă пурнăçланă тата унăн 70 процентне "чĕрĕ" укçапа тивĕçтернĕ республикăри икĕ районтан пĕри пулни кăмăллă. Анчах та ку лăпланмалли сăлтав мар, терĕ Фатих Саубанович. Бюджета пуянлатмалли çĕнĕрен те çĕнĕ çул-йĕрсем шырамаллине вăл темиçе хутчен те палăртрĕ. Район администрацийĕн экономика енĕпе ĕçлекен çумĕ, финанс пай заведующийĕ Ф.Н.Губайдуллин тухса калаçса, аргументсем илсе кăтартни ку шухăша тата та вăйлатрĕ. Пилĕк уйăх хушшинче районти налук парăмĕ 15 миллиона çитнĕ. Сахăр завочĕн, "Сельхозтехника" АОн, машинăсем тăвакан заводăн, МСОн парăмĕсем 2,5-2 миллион тенкĕ (çĕнĕ укçапа) шутланаççĕ. Элеватор, АТП, ДРСУ, сахăр завочĕ, машинăсем тăвакан завод, сĕт-çу комбиначĕ ĕç укçи панă пулин те, уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налука куçарма манаççĕ, пĕрремĕшĕнче ку сумма 350 пин тенке çитнĕ.

Налук полицийĕн финанс кризисĕ тӳсекен суту-илӳ базин тата хатĕрлев кантурĕн пурлăхне арестлеме тӳр килнĕ, машинăсем тăвакан завода, сахăр заводне, сĕт-çу комбинатне те çак шăпа кĕтет.

Çакăн пек лару-тăру пулнишĕн хумханса, Фарит Нилович çаплах территори больница касси те тивĕçлĕ ĕçлеменнине палăртрĕ. Малашне те пенси фончĕн ĕçне активлатнипе бюджета ăнăçлă пурнăçлассине тивĕçтерме кашни отрасльте çирĕп йĕрке тумаллине тата укçа-тенке перекетлемеллине каласа хăварчĕ. Фарит Нилович малтанхи пек исполнительнăй листсемпе ĕç укçи пама пăрахма, штата кĕскетме, бюджет укçине перекетлĕ тăкаклама, кулленхи тата коммуналлă тăкаксене çирĕп шута илсе пыма тата кашни отрасльте хушма укçа-тенкĕ ĕçлесе илме майсем шырама чĕнсе каларĕ. Бюджета пурнăçлассине тимлĕх уйăрманнисем тĕлĕшпе чи хытă мерăсем йышăнĕç тесе аса илтерчĕ вăл.

Канашлу итогĕсене



Ф.С. Сибагатуллин пĕтĕмлетрĕ. Вăл бюджетăн тупăш пайне пурнăçласси, укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ усă курассине тивĕçтересси - тĕп задачăсем пулнине палăртрĕ тата конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

Фатих Саубанович укçа-тенке перекетсĕр тăкаклакансене, налук ăçчеНĕсен требованийĕсене тимлĕх уйăрманнисене асăрхаттарчĕ.

Штатсене кĕскетесси, должность ĕç укçисене пăхса тухасси, тӳлеме пултаракан граждансене çеç ссуда парассикăна хальхи вăхăт ыйтать. "Рынока кĕретпĕр - хăвăр çинчен шухăшлăр, район çинчен ан манăр", - терĕ юлашкинчен Фатих Саубанович. Урăхла каласан, тупăшлă продукци туса кăларассине аталантарма пĕтĕм вăйран тăрăшмалла, çавна май ĕç укçине вăхăтлă парассине, налук тӳлессине, бюджета пуянлатассине, район инфраструктурине аталантарма май параканскере, тивĕçтермелле.

## Тав çырăвĕ

**Хисеплĕ Фатих Саубанович! Тутарстан Республикин Культура министерстви Сире Нурлат районĕн культурине аталантарассине пурлăхпа мораль енчен пулăшнăшăн тата Республикăри йăлана кĕнĕ XIII "Выля, хуткупăс!" уява халăх творчествин коллективĕсене хутшăнма май тупса панăшăн тав тăвать. Эсир пулăшнипе уяв питĕ лайăх иртрĕ, куракансем, унта хутшăннисем, Хусан хулин хăнисем ăна тахçанччен асра тытĕç, Тутарстан Республикин ертӳçи те уява пысăк хак пачĕ.**

**Çаплах культура пайĕн заведующине Р.Н.Яруллина, А.И.Осипова инструктора, чăваш халăх юррисен "Çăлкуç" ансамблĕн ертӳçине С.С.Ефремована "Выля, хуткупăс!" уява активлă хутшăннăшăн пысăк тав тăватпăр.**

**Хисеплĕ Фатих Саубанович, Сире ĕçре пысăк ăнăçлăхсем, çирĕп сывлăх сунатпăр. Нурлат районĕнче пурăнакан халăхсен культурине малашне те аталантарассишĕн тăрăшасса шанатпăр.**

**М.М.ТАИШЕВ,**
**ТР культура министрĕ.**

## Уйрăм сектортан сĕт сутăн илнин шайĕ

**Даннăйсем 1998 çулхи июнĕн 9-мĕшĕ тĕлне**

**Цифрăсен пĕрремĕш графи - 1998 çулăн çур çуллăх заданийĕ, иккĕмĕшĕ - пурĕ сĕт сутнă (центнерпа), виççĕмĕшĕ - пĕр ĕне пуçне вăтамран сĕт сутнă, тăваттăмĕшĕ - пĕлтĕрхи шайран ытларах е сахалрах (килогрампа)**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Кăчăканлă | 520 | 1278 | 652 | +215 |
| Андреевка | 277 | 428 | 382 | +274 |
| Амзя | 647 | 841 | 317 | +7 |
| Селенкĕш | 442 | 575 | 316 | +42 |
| Çĕнĕ Иглаел | 1044 | 1210 | 300 | +16 |
| Кульбаево-Мараса | 704 | 774 | 294 | +5 |
| Кивĕ Элмет | 596 | 701 | 286 | +113 |
| Кăрмăш | 1128 | 1222 | 256 | +61 |
| Якуркел | 880 | 648 | 186 | +20 |
| Хумаел | 848 | 613 | 162 | +81 |
| Вăтам Хăмăшлă | 704 | 470 | 162 | -120 |
| Тĕкĕрмел | 400 | 217 | 155 | +49 |
| Хиртикӳл | 588 | 341 | 155 | -18 |
| Анат Нурлат | 783 | 459 | 143 | -8 |
| Кивĕ Чаллă | 967 | 506 | 126 | -25 |
| Киклĕ | 1031 | 524 | 125 | -34 |
| Гайтан | 720 | 271 | 90 | -49 |
| Якаел | 654 | 239 | 88 | -23 |
| Чулпан | 520 | 181 | 87 | -272 |
| Ялавăр | 576 | 211 | 77 | -8 |
| Пухтел | 292 | 77 | 68 | -48 |
| Тĕрнеç | 518 | 101 | 48 | -40 |
| Пӳлеркӳл | 582 | 107 | 44 | -21 |
| Мамăк | 334 | 43 | 25 | -24 |
| Заречнăй | 512 | -- | -- | -- |
| Тăмпа | 233 | -- | -- | -- |
| **Район тăрăх** | 16500 | 12037 | 178,4 | +3,4 |

**Илсе кăтартнă цифрăсенче уйрăм хуçалăхсенчен сĕт пуçтарнин шайĕ лайăх палăрать. Çавăнпа та кунта ăнлантарса пама кирлĕ мар. Вулакансене çакна кăна тимлĕх уйăрма ыйтас килет: сĕт сутни ял çыннисемшĕн хушма тупăш çăлкуçĕ. Продукцин сутăн илмелли хакĕ 1090 тенкĕ (çĕннипе) шутланать, çав вăхăтрах ăна вăхăтлă параççĕ. Çавăнпа та вырăнти самоуправленин Совечĕсен ертӳçисене эпир халăхран сĕт пухас ĕçе активлатма чĕнсе калатăр.**

## Тăрăшмасан йĕрке пулмасть

Ял çыннисен пӳрчĕсен çывăхĕнчи территорисенче тивĕçлĕ йĕрке çукки тахçанах тата чылайăшне пăшăрхантарать: унта та, кунтастроительство материалĕсем йăваланса выртаççĕ, картасем тикĕс мар, çаксем пурте ял сăн-сăпатне пăсаççĕ. Граждансем çаплах çĕр участокĕсене законсăр йышăннă фактсем палăртнă. Нумаях пулмасть хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ хушнипе районти çĕр ресурсĕсем тата çĕр йĕркелĕвĕ тĕлĕшпе ĕçлекен комитет ĕçченĕсем хăш-пĕр ялсенче пулса курнă тата вырăнсенче самоуправленин Совечĕсен представителĕсемпе ял урамĕсене пăхса çаврăннă. Вĕсем, паллах, тасалăхпа тата йĕркелĕхпе палăрса тăмаççĕ. Хăш-пĕр граждансене ТР "Административлă яваплăх çинчен" калакан Законĕн 2,4-мĕш статйисен положенийĕсене пăснăшăн штраф панă. Çапла, Чулпан ялĕнче çеç 7 çемье пуçлăхне кашнине 250-шар тенкĕ штраф тӳлеттернĕ. Комитет представителĕсем палăртнипе çав ял санитари енчен чи юхăннисен, тирпейсĕррисен шутне кĕрет. Чи таса та илемлисенчен пĕрне вара Гайтан ялне палăртнă. Вĕсем Хиртикӳл, Кукăркӳл, Тĕрнеç, Ялавăр ялĕсенче те çавăн пек тĕрĕслев иртнернĕ.

Комитет ĕçченĕсем районти мĕнпур ялсене çитсе курма планлаççĕ. Çавăнпа та тӳрех асăрхаттаратпăр: сире штраф ан тивтĕр тесен, хăвăрăн урамăрсене санитари енчен тасатас тĕлĕшпе мĕнпур мерăсене йышăнăр. Тирпейилем кĕртес тесе хăвăр туни - хăвăршăн.

## Хисеплĕ вулакансем!

*Районта тухса тăракан "Туслăх" ("Дуслык", "Дружба") хаçата 1998 çулхи иккĕмĕш çурçуллăха çырăнтарасси малалла пырать. Çырăнтару хакĕ 6 уйăха -26 тенкĕ те 40 пус, 3 уйăха - 13 тенкĕ те 20 пус, 1 уйăха - 4 тенкĕ те 40 пус.*

**Çĕнĕ хыпарсем**

## Шкултан - помидорсем

Хулари 4-мĕш номерлĕ шкул теплици халăха 2000 тĕм помидор, 500 - тутлă пăрăç сутнă. Теплица заведующийĕ Т.Н.Белянина каланă тăрăх, сутса пухнă укçапа теплица хуçалăхне апатлантармалли кирлĕ хатĕрсем туянма тăкаклĕç.

## Вак-тĕвек кăна, анчах хитре

Эсир НГДУ УТТ территорийĕнче йĕркелĕх хуçаланнине асăрханă пулĕ? Кунти çула асфальт сарнă хыççăн картасене çĕнĕрен сăрланă, кунта чечек йăранĕсем тунă, вĕсем патне шурă акăшсем лартнă. Вак-тĕвек кăна, анчах та...

# Редакци почтинчен

## Садри “Ҫăлтăрлă сехет”

Шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийĕсенчи тутар чĕлхине вĕрентекенсен методика пĕрлешĕвĕн ларăвĕсем ирттересси пирĕн йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Черетлĕ лару “Ивушка” ача садĕнче пулчĕ. Тутар чĕлхине вĕрентекен Наиля Гареевна Садыкова хăйĕн воспитанникĕсемпе пире “Ҫăлтăрлă сехет” вăййа кăтартса пачĕҫ. Пĕрремĕш турта ачасем халапсем тăрăх хăйсен пĕлĕвне кăтартрĕҫ. Иккĕмĕш тур чĕрчунсем ҫинчен пулчĕ, виҫҫĕмĕшĕ - ҫулталăк вăхăчĕсем ҫинчен. “Ҫăлтăрлă сехетре” Радик Шамсутдинов ҫĕнтерчĕ. Вăййа хутшăннисене пурне те парнесем пачĕҫ. Наиля Гареевна вăйă тăхтавĕсенче воспитательсем валли интереслĕ конкурс йĕркелерĕ. Кунта “Колокольчик” ача сачĕн тутар чĕлхине вĕрентекен Фазиля Галимовна чи нумай очко пухса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ҫĕнтерӳҫĕн парни хăйне евĕрччĕ: ăна конверт пачĕҫ, унта ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕнче вăл тутар чĕлхипе вĕрентекенсене уҫă урока чĕннине пĕлтернĕччĕ.

Методика пĕрлешĕвĕн ларăвĕн иккĕмĕш пайĕнче эпир Наиля Гареевнан творчество лабораторийĕпе паллашрăмăр. Тутар чĕлхин кабинетне наци уйрăмлăхĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ. Пире “Туган жирем - газиз Нурлатым” стенд, “Хуракăшсем” халапăн пысăк иллюстрацийĕ тĕлĕнтерчĕҫ. Тĕрленĕ алшăллисем, куллен тыткалакан тĕрлĕ япаласем, хăй хатĕрленĕ тутар апат-ҫимĕҫĕ - ҫаксем пурте Наиля Гареевнан ăсталăхне ҫирĕплетеҫҫĕ. Пире илемлĕ альбомсем, урок конспекчĕсем, тĕрлĕ методика пособийĕсем те килĕшрĕҫ.

Лару ĕҫне РОО инспекторĕ Г.В.Измайлова тата Р.Ф.Хасаншина методист хутшăнчĕҫ. Вĕсем нумаях пулмасть Актаныш районĕнче пулнă наукăпа практика конференцийĕ ҫинчен каласа пачĕҫ, ҫаплах Актаныш воспителĕсен ĕҫ опычĕпе паллаштарчĕҫ, унтан илсе килнĕ кĕнекесемпе пособисем салатса пачĕҫ.

**Р.ЗАМАЛЕЕВА,**
**“Пчелка” ача сачĕн воспитателĕ.**

## Стипенди хăҫан парĕҫ?

Алло, ку редакци-и? Сирĕн пата СПТУра вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен ятĕнчен Иванова шăнкăравлать. Пирĕн ачасем II курсра вĕренеҫҫĕ, вĕсем январь уйăхĕнченпех стипенди илмеҫҫĕ. Сумми те пысăк мар, пурĕ те 43 тенкĕ кăна вĕт, ăна та III курсра ҫеҫ тӳлеме шантараҫҫĕ. Институтсенче те студентсене стипенди вăхăтлă тӳлеҫҫĕ, пирĕн патра вара мĕншĕн тăсаҫҫĕ-ха? Ялан мĕнле те пулин сăлтав ҫине йăвантармалла мар ĕнтĕ. Эсир, училище ертӳҫисене ку ыйту тĕлĕшпе ăнлантарса пама ыйтсан лайăх пулмалла.



*Районти тĕп больницăри ача-пăча уйрăмĕ ачасене сиплекен, вĕсене квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ паракан пĕртен-пĕр уйрăм. Кунта пурĕ 22 ҫын вăй хурать, вĕсенчен кашни чирлĕ ачана талăкăн хăть хăш вăхăтĕнче те пулăшу пама хатĕр. Ҫак туслă, пĕтĕҫӳллĕ те пысăк квалификациллĕ коллективăн представительницисенчен пĕрне эсир ӳкерчĕкре куратăр. Ку - Тамара Васильевна Петрова дежурнăй медсестра.*

<u>Кӳренӳллĕ ҫыру</u>

## Пĕчченнисем те ҫынсем-ҫке

Хисеплĕ редакци! Хаҫат страницисенче эсир яланах пурнăҫне пĕрле ирттернĕ, нумай ача пăхса ҫитĕнтернĕ мăшăрсем ҫинчен ҫыратăр. Анчах ҫав хĕрарăмсем мĕнпур ĕҫе мăшăрĕсемпе пайланипех телейлĕ вĕт. Мăшăр пулсан мĕншĕн ачасем ӳстерес мар-ха? Ҫапах ҫумĕсенче пулăшакансем ҫук ҫемьесем те сахал мар вĕт пирĕн - упăшки вилнĕ е пăрахнă, ачисене хĕрарăм пĕччеnex, никам пулăшмасăр ҫитĕнтерет. Ҫакăн пек ҫирĕп кăмăллă та сăпайлă хĕрарăмсем ҫинчен ҫырнине курасчĕ. Ҫакă пирĕн чипер ĕҫченсен кăмăлĕсене ҫĕклĕччĕ, вĕсене вăй парĕччĕ. Ачисене пăрахнă амăшĕсемшĕн вара тĕслĕх пулĕччĕ. Пĕччĕннисене ҫак пурнăҫра ахаль те йывăр, атьăр-ха, вĕсемшĕн ырă сăмахсем шеллер мар.

**В.ЯРУЛЛИНА.**
**Нурлат хули.**

# Чи лайăх сăмахсем мĕнле тупас...

**Вăхăт тапни**

1929 ҫулхи январĕн 31-мĕшĕнче Октябрь районĕнчи Нагорки поселокĕнче колхозниксен нумай ачаллă ҫемйинче хĕрача ҫуралнă, ăна Ольга ят панă, скандинави чĕлхинчен куҫарсан вăл сăваплă тенине пĕлтерет. Сăваплă - ку вăл хăй ҫинчен усал мар, ырă сăмахсем нумай илтекен ҫын.

Унăн ҫамрăклăхĕ вăрҫăн йывăр та хăрушă ҫулĕсенче иртнĕ. Вăл ыттисемпе пĕрле хирте, йĕтем ҫинче ĕҫленĕ. Нимĕнле йывăрлăхран та хăраман. Кивĕ Чаллăри ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкултан вăл питĕ лайăх паллăсемпе кăна вĕренсе тухнă тесен те юрать. 1944 ҫулта Пĕкĕлмери медицина училищинчи фельдшер уйрăмне вĕренме кĕнĕ, виҫĕ ҫул иртсен вара Чулпан участок больницине ĕҫлеме янă.

Ĕҫе ăна Ксения Ивановна Березина тĕп врач йышăннă. Унăн пур-нăҫĕнчи ҫак тапхăрта аса илмелли интереслĕ самантсем чылай пулнă.

Ольга Ксения Ивановнан ирĕк те хăтлă хваттерĕнчех пурăннă, унта питĕ пуян библиотека пулнă. Ксения Ивановна питĕ лайăх ертӳҫĕ шутланнă, вăл “врач - професси мар, пурнăҫ йĕрки” тесе шутланă. Паллах, Ксения Ивановна Ольгăна яланах пулăшнă.

Кĕскен каласан, Ольга Васильевнашăн унăн ĕҫĕ яланах пĕрремĕш вырăнта тăнă. Унăн нормăламан ĕҫ кунĕ пулнă: чирлисене йышăнасси, хăйне чĕннисене тивĕҫтересси тата общество интересĕсене те тимлĕх уйăрнă. Вăл ҫаплах комсомол организацийĕн секретарĕ те шутланнă тата колхоза ял хуҫалăх ĕҫĕсене пурнăҫлама пулăшнă.

Ольга Васильевна Степанова хăйĕн пурнăҫне Чулпанти больницăпа ҫыхăнтарнă. Кунта вăл хăйĕн шăпипе тĕл пулнă та 1954 ҫулта илемлĕ те вăйлă яша - Николай Степанова качча тухнă. Вăл ҫавăнтисемех, больницăра завхоз пулнă, кайран вара колхозра тимĕрҫĕ пулса вăй хунă. Вĕсем икĕ ача ҫуратса ӳстернĕ. Хĕрĕ Татьяна Ульяновскри медицина училищинчен вĕренсе тухнă, халь вăл Нурлатри тĕп больницăн поликлиникинче акушерка пулса ĕҫлет. Ывăлĕ Василий Екатеринбург хулинче пурăнать. Ольга Васильевнан калама ҫук илемлĕ тăватă мăнук ӳсеть.

Ăна чылай врач-терапевтсемпе ĕҫлеме тӳр килнĕ. Уйрăмах вăл Наталья Тимофеевна Генераловăна аса илет. Халь вăл Лениногорскри тĕп больницăра вăй хурать. Ҫаплах Салават Зарифович Габитова та ырăпа кăна асăнать, вăл Хусанти медицина университетĕнче вĕрентет.

Ҫак чылай ҫулсем хушшинче вăл пурне те вĕренсе ҫитнĕ. Чирлĕ ҫын унăн кабинетне кĕрсенех Ольга Васильевна “чĕрĕ компьютер” евĕрлĕ чирлĕ ҫын ҫинчен пурне те калама пултарнă: чир, пурнăҫ историйĕ, мĕнле чирпе чирлесе ирттерни тата ытти те. Кайран вара маларахри диагнозпа паллашса, чирлĕ ҫынна сипленме койка ҫине вырттма янă. Амбулатори тата диспансер карттисене, статталонсене тата ытти отчетлă документсене кашни кун ҫырнă, кунта тата ытти ĕҫре вара Ольга Васильевнапа танлашакан пулман. Ҫак сăпайлă хĕрарăм хăйĕн ҫинчен калама юратмасть: “Эпĕ ыттисем пекех ĕҫленĕ, кунта нимĕнле уйрăмлăх та ҫук”.

Унăн медицинăра ĕҫленĕ стажĕ питĕ пысăк - 50 ҫул!

Нумаях пулмасть вăл хăйĕн мăшăрне пытарчĕ, апла пулин те унăн пурнăҫĕ малалла пырать. Хваттерте хăнасем час-часах пулаҫҫĕ: хĕрĕ, мăнукĕсем, ватă ҫынсен ҫуртĕнче пурăнакан пĕлĕшĕсем, кӳршĕ пенсионерка. Вĕресе babaракан сăмавартан кукăльпа чей ĕҫсе вĕсем васкамасăр, чунчĕререн калаҫса лараҫҫĕ.

Ольга Васильевнана телейлĕ кану, ҫирĕп сывлăх, ҫывăх ҫыннисемпе тăванĕсен, тусĕсен, кӳршисен шанчăклă тĕрекне сунас килет.

**В.ПАРГУНЬКИН,**
**Чулпан участок больницин врачĕ.**

<u>Ыйту - хурав</u>

## Чечек илемлĕ те...

**Манăн пĕчĕк ача пур. Эпĕ хăш-пĕр чечексене ача пӳлĕмĕнче тытма юрамасть тенине илтнĕ. Кун ҫинчен тĕплĕнрех хаҫатра вуласа пĕлесчĕ.**

**В.СТЕПАНОВА.**

Чечексенчен кактуссем сиенлĕ. Тĕрĕссипе вĕсен сĕткенĕ наркăмăшлă. Йĕпписем вара? Пĕр йĕппи ӳте кĕрсе кайсан та тем чухлĕ ыраттарса ҫӳрет. Ăна тӳрех хуҫасран асăрхаса пинцетпа кăларма тăрăшăр, аманнă вырăна одеколон сĕрĕр, пластырь хурăр.

Олеандра килте тытма юрамасть. Вăл шурă е ҫутă, хĕрлĕ чечеклĕ, вăрăм ҫулҫăллă тĕмĕ. Ку чечекре чĕрешĕн сиенлĕ сĕткен - олеандрин - пур. Пĕчĕк ача ун ҫулҫине чăмлама пултарать. Олеандра тирпейлесе каснă хыҫҫăн алă ҫумасан та наркăмăшлă сĕткен ҫăвара лекет. Инкеке кĕтсех тăр: хăстарать, хырăм ыратма пултарать, чĕре таппи улшăнать.

Пуҫа ыраттармалла вăйлă шăршлă жасмин, гиацинт, примула валли те ача пӳлĕмĕнче вырăн ҫук. Вĕсем ачана аллерги парса дерматитпа, экземăпа, астмăпа чирлеттереҫҫĕ, ачан манка юхма пуҫлать.

Сарăлса ӳсекен фикус чӳречен пĕтĕм лаптăкне йышăнни те япăх: вăл хĕвел ҫутин 50 процентне “ҫисе яма” пултарать. Чӳрече ҫинче пĕчĕк чечексем ҫеҫ ларччăр, вĕсем кантăк лаптăкне 15 процентран ытла ан йышăнччăр.

Мĕнле чечексем ӳстерсен лайăхрах? Лимон йывăҫĕ, герань, роза, плющ, аспарагус. Вĕсем фитонцид - хăйне майлă ӳсентăран антибиотикĕсем - сывлăша тасатакан, бактерисене, хурт-кăпшанкăна вĕлерекен эфир ҫăвĕсем кăлараҫҫĕ.

## Эрех пулăшмасть

**Ман юн пусăмĕ пĕчĕк, ăна йĕркене кĕртме пĕр черкке эрех ĕҫмелле теҫҫĕ. Пĕр черкке ĕҫсен пуҫ ҫаврăнать, унтан ӳкетĕп. Ялан эмел ĕҫетĕп. Пĕрмай кофе ĕҫни те юрамасть. Манăнни пек пĕчĕк юн пусăмĕпе аптракансем татах пур-ши, вĕсем мĕнле сипленеҫҫĕ-ши?**

**Верина.**

Эрех ĕҫнĕ хыҫҫăнах юн тымарĕн стенкисем сарăлаҫҫĕ. Ҫакă вăл юн пусăмне пĕчĕклетет. Юн тымарĕ тăрук сарăлнă пирки ҫыннăн пуҫĕ ҫаврăнать, вăйĕ пĕтет.

Эрех витĕмĕ иртсе пынă, ҫын урăлнă май сарăлнă юн тымарĕсем кирлĕ виҫерен ытларах пĕрĕнеҫҫĕ. Ҫавăн пирки ҫыннăн пуҫĕ ыратать, куҫĕ умĕнче хура пăнчăсем выляҫҫĕ. Юн тымарĕ хăвăрт сарăлса кайни те, виҫерен ытлашши пĕрĕнни те сывлăхшăн сиенлĕ.

Ҫавăнпа эрех ĕҫсе юн пусăмне “сиплени” тĕрĕс мар, усăллă та мар.

# Çĕнĕ технологисене - тимлĕх

Çĕр ĕçĕнче, çав шутра тăпрана ĕçлесе хатĕрлессин ака уйĕнхи тактикинче вĕçĕмсĕр тухăçлă та меллĕ технологисем курăнма тытăнчĕç. Акă пирĕн районта та Нурлатри машзаводра Н.К.Мазитов академик ертсе пынипе туса кăларнă КБМ-10,5 тата КБН-8 евĕрлĕ анлă илекен культиваторсемпе икĕ çул ĕнтĕ ăнăçлă усă кураççĕ. Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Киклĕ", Хафизов ячĕпе хисепленекен тата ытти хăшпĕр хуçалăхсем çак культиваторсем пысăк усă панине пĕрремĕш çулах ăнланса, вĕсене икшервиçшер туяннă. Халь вĕсем районти кашни хуçалăхра пур тесен те юрать тата вĕсемпе кăçалхи акара тухăçлă ĕçленĕ. Лаптăксен 30 пин гектарĕн çуррине ытла шăп çак техникăпа культивацилесе, вăрлăха тăпрана варăнтарнă. Çакăн результачĕ паян куç умĕнче - ку участоксенче калчасем тикĕс шăтса тухнă, çавăнпа та çак лаптăксене чи ир сроксенче сӳрелеме тата минераллă удобренисемпе хушса апатлантарма пултарнă. Мĕншĕн тесен çĕре çак культиваторсемпе ĕçлесе хатĕрлеме май пур, пĕрремĕшĕнчен, эпир хамăрăн практикăра ĕнентĕмĕр ĕнтĕ, акана кĕске вăхăт хушшинче, тăпрара нӳрĕк пĕтиччен пурнăçлама пулать, иккĕмĕшĕнчен, тăпрана кирлĕ чухлĕ тарăнăшне кăпкалатма тата вăрлăха хытă никĕс çине акма май парать. Кăçал юлашки уйрăмах актуаллă пулчĕ, мĕншĕн тесен, пĕрремĕшĕнчен, çанталăк типĕ тăнипе тăпрари нӳрĕк хăвăрт пĕтнипе вăрлăха тарăн акни вырăнлă марччĕ, иккĕмĕшĕнчен, тăпрана вăрлăхран тарăнрах кăпкалатсан нӳрĕк ытларах пĕтнĕ пулĕччĕ. Çĕнĕ культиваторсемпе усă курни техника перекетлес енчен те усăллă, чи малтан тракторсем, çуламалли-сĕрмелли материалсем тĕлĕшпе.

Шел пулин те, мĕнпур хуçалăхсенче çĕнĕ культиваторсемпе анлăн усă кураççĕ теме çук-ха. Чăнах та, кунта объективлă тата субъективлă сăлтавсем пур. Пĕрремĕшĕнчен, мĕнпур участоксене çĕнĕ культиваторсемпе кăна ĕçлесе хатĕрлесе ĕлкĕрме май çук, çавăнпа та КПГ-4 тата КПС-4 культиваторсемпе усă кураççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, ку чи чăкăлтăшлă сăлтав, халиччен çумкурăксене, тĕпрен илсен, хир сĕллине пĕтерес тесе тарăн культивациленĕ. Паллах, кун пек туни химилле хатĕрсем çитмен условисенче çеç хăйне тӳрре кăларнă. Халь вара, хăть мĕнле гербицид та суйласа илме май пур чухне, хир сĕлли ӳсессе, çĕр типессе кĕтмелле мар. Акă кăçал та гербицидсен ассортименчĕ, çаплах хальхи вăхăтри опрыскивательсем тĕрлĕ тата çителĕклĕ (шăп кăна çавсене пула сахăр кăшманне французсен технологийĕпе акса ӳстересси çине куçма май пулчĕ вĕт).

Кивĕ культиваторсене илес пулсан, кăçалхи условисенче вĕсемпе кĕркунне кирлĕ пек сухаласа хăварман чĕкĕнтĕр участокĕсене ĕçлесе хатĕрлессинче усă курнă. Кĕрхи культурăсенчен пушаннă анасене сухаланă тата тепĕр хут акнă чухне те вĕсемпе усă курни усăллă, таса çĕртме участокĕсенче çумкурăк ӳссе каясран та вĕсемпе усă курсан лайăх витĕм кӳрет. Анчах та çуркунне вăрлăха кирлĕ чухлĕ тарăнăшне варăнтарма май çук. Шăп кăна çак сăлтава пула "Рассвет" хуçалăхра урпа тикĕс шăтман, "Игенче" тата "Заветы Ильича", "Урняк" хуçалăхсен хăшпĕр участокĕсем çинче вара çурхи тулă. Калчасен çăралăхĕ те тивĕçлĕ шайра мар. Юлашки икĕ хуçалăхра тулла пĕлтĕр кукуруза тыралăх акнă участоксем çине ӳстернĕ. Кĕркунне кукурузăна мĕнле йывăр условисенче пуçтарса илнине пурте пĕлеççĕ вĕт-ха, паллах ĕнтĕ, çак хирсене тивĕçлипе ĕçлесе хатĕрлеймен. Пусă çаврăнăшне тĕрĕс тунă тата ăна пăхăнакан хуçалăхсенче ку участоксене акнă е таса çĕртме лаптăкĕсене хăварни лайăх пулнă, çӳлерех асăннисем вара сиен тӳсеççĕ. Анлă илекен культиваторсем çитмесен çĕртме участокĕсенче икĕ йĕрпе сӳреленĕ хыççăн акни çĕре кивĕ культиваторсемпе çăвăрнинчен тухăçлăрах. Кăçал районта тĕштырăсене пĕтĕм лаптăксен пĕрре пиллĕкмĕш пайне çак меслетпе акнă, кăтартусем те лайăх.

"Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕнче, хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан" ассоциацийĕнче, ытти хуçалăхсенче ĕçе çак меслетпе йĕркеленипе вăхăта та перекетлерĕç, калчасем те тикĕс шăтса тухрĕç. Лайăх опыт сарлака илекен культиваторсемпе усă курни е икĕ йĕрпе сӳрелени тухăçлăрах пулнине çирĕплетет. Апла пулсан, малашне пурин те вĕсенчен тĕслĕх илмелли çеç юлать.

**В.ГАВРИЛОВ,**
**ял хуçалăхĕпе апатçимĕç управленийĕн ӳсентăран ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн начальникĕ.**



Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.

*Ясави Зайниевич Ахмадеев (ӳкерчĕкре) чылай çул хушши комбайнер пулса ĕçленĕ. Вăл тырпул хакне, çĕршĕн яваплă пулнине пĕлекен мухтава тивĕçлĕ çĕр ĕçченĕ. Унăн пысăк опытне, хуçалăхри механизаторсем хушшинче авторитетлă пулнине шута илсе, Ясави Зайниевича бригадира техника енчен пулăшакан пулма лартнă. Хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕнче кăçал ака йĕркеллĕ иртнинче Я.Ахмадеевăн тӳпи те пур. Каннă вăхăтра вăл çĕршыври, республикăри, районти хыпарсемпе хапăлласах паллашать, чи малтан "Дуслыкпа" "Татарстан яшлерэ" изданийĕсене çырăнать.*

## Юбиляра саламлана

**ДРСУ. Нумаях пулмасть коллектив предприятин чи хисеплĕ ĕçченĕсенчен пĕрне - Вячеслав Николаевич Кузнецова 50 çулхи юбилейпа саламланă. 20 çул ытла вăл çул-йĕр юсакан тата тăвакан управленире вăй хунă. Управленин тĕп механикĕ, асфальтпа бетон завочĕн мастерĕ - кусем унăн ĕç биографийĕн страницисем. Вячеслав Николаевич тӳрĕ кăмăллă, йĕркеллĕ, ĕçчен çын. 1991 çулта Вячеслав Николаевич Раççейри çул тăвакансен Третьяков ячĕллĕ премине тивĕç пулнă. Хальхи вăхăтра та вăл ăнăçлă ĕçлет. ДРСУ начальникĕ Р.А.Газизуллин В.Н.Кузнецова юбилей ячĕпе саламланă май район администрацийĕн Хисеп грамотине, асăнмалăх парне панă тата**

# Программа телевидения

**Понедельник, 15 июня ОРТ**

**Утренние передачи не транслируются в связи с профилактикой технических средств.**

15.00,17.20,23.50 Новости. 15.20 "Мой домашний дракон". 15.45 Марафон-15. 16.20,22.50 Футбол. 18.30 "Роковое наследство". 19.15 Час пик. 19.40 Угадай мелодию. 20.10 "Человек в маске". 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Сериал "Горец". 01.00 Х/ф "Сад".

**Канал "Россия"**

**Утренние передачи не транслируются в связи с профилактикой технических средств.**

14.00,17.00,20.00,23.40 Вести. 14.30 "Аленький цветочек". 15.10 "Маленький бродяга". 15.35 "Королевство Кривых Зеркал". 17.30 Фильм для детей. 18.30 Актерский дом. 19.00 Инициатива плюс...20.25 Подробности. 20.45 "Санта-Барбара". 21.45 Футбол. 0.00 "Дежурная часть". 0.15 Сиреневый туман. 0.55 Автошоу.

**Вторник, 16 июня ОРТ**

6.00 "Доброе утро". 9.00,12.00,15.00,18.00,23.50 Новости. 9.15,18.20 "Роковое наследство". 10.40 Домашняя библиотека. 11.00,22.30 Футбол. 12.15 "Вместе". 13.00 Х/ф "Четыре танкиста и собака". 15.20 "Мой домашний дракон". 15.55 Счастливый случай. 16.40 "Пещера Золотой розы". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.05 Час пик. 19.30 Угадай мелодию. 20.00 Тема. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Клуб "Белый попугай".

**Канал "Россия"**

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00.23.45 Вести. 8.00,0.05 "Дежурная часть". 8.15 Мультфильм. 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 "Православный календарь". 9.00 Диалоги о животных. 9.55 Мультфильм. 10.05, 20.45 "Санта-Барбара". 11.35, 21.45 "Петербургские тайны". 14.30 Х/ф "О принцессе Ясочке и крылатом сапожнике". 16.00 "Маленький бродяга". 16.25 Мультфильм. 18.05 Дневник чемпионата мира по футболу. 18.40 Все начинается с урока. 19.15



На тему дня. 20.25 Подробности. 22.45 "Пси фактор". Телесериал. 0.00 "Дежурная часть". 0.15 Футбол.

**Среда, 17 июня ОРТ**

6.00 "Доброе утро". 9.00,12.00,15.00,18.00,0.10 Новости. 9.15,18.20 "Роковое наследство". 10.00 Что? Где? Когда? 12.15 "Вместе". 13.00 "Четыре танкиста и собака". Х/ф. 15.20 "Мой домашний дракон". 15.45 Классная компания. 16.10 Зов джунглей. 16.40 "Пещера Золотой розы". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.00 Футбол. 19.50 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 "Поезд в Броктун". 23.35 "Человек и закон". 0.20 Футбол. 2.30 "Парижские таймы".

**Канал "Россия"**

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30,11.00, 14.00, 17.00, 20.00, 21.30,23.45 Вести. 8.00,0.05 "Дежурная часть". 8.25 "Медицинский вестник". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 "Православный календарь". 9.00 "Сказки острова Мэн"-.Док.фильм. 9.30 Маски-шоу. 10.05,20.45 "Санта-Барбара". 11.30,21.45 "Петербургские тайны". 12.25 Моя семья. 13.20 "У всех на устах". 13.45 "Ваши любимые мелодии". 14.30 "Сказка о золотом петушке". 15.00 "Маленький бродяга". 15.25 Х/ф "Никудышная" 20.25 Подробности. 22.45 "Агата Кристи, Пуаро".Сериал. 0.20 Футбол.

**Четверг, 18 июня ОРТ**

6.00 "Доброе утро". 9.00,12.00,15.00,18.00,1.10 Новости. 9.15,18.20 "Роковое наследство". 10.00 Тема. 10.45 Домашняя библиотека. 11.00 Футбол. 12.15 "Вместе". 13.00 "Четыре танкиста и собака". 15.20 "Невероятные приключения Джонни Квеста". 15.45 Классная компания. 16.10 Детские анекдоты. 16.40 "Пещера Золотой розы". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.05 Час пик. 19.30 "Эти забавные животные". 20.00 "В поисках утраченного". 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Х/ф "Человек,который хотел стать царем". 0.10 Футбол.

**Канал "Россия"**

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30, 11.00,14.00,17.00, 20.00,23.40 Вести. 8.00,0.15 "Дежурная часть". 8.25 "Стронг" представляет. 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 "Православный календарь". 9.00 Вовремя. 9.25 Сам себе режиссер. 9.50 Мультфильм. 10.05,-20.45 "Санта-Барбара" 11.30, 21.45 "Петербургские тайны". 12.25 Совершенно секретно. 13.20 Автошоу. 13.45 "Ваши любимые мелодии" 14.30 Мультфильм. 14.50 "Маленький бродяга". 15.15 "Тайна головоломки" Дет.фильм. 20.25 Подробности. . 22.50 Футбол. 1.00 Дежурная часть. 1.15 Чемпионат НБА.

Лениногорск хулинче хĕрарăмсен командисем хушшинче волейболла выляссипе республикăри 1-мĕш çуллахи "Ял çамрăкĕсем" спорт ваййи иртрĕ.

Пирĕн кăнтăр-хĕвелтухăç зонинчен 7 команда хутшăнчĕ.

Пирĕн районти пухнă командăра, тĕпрен илсен, 2-мĕш номерлĕ шкул спортсменкисем пулчĕç. Çакна та каласа хăвармалла, пирĕн хĕ-

## Волейбол

рсем питĕ лайăх вылярĕç. Пилĕк команда çĕнтерсе (Альметьевск районне выляса ярса), 2-мĕш вырăн йышăнса Зеленодольск хулинче июнĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса июлĕн 4-мĕшĕччен иртекен финалти ăмăртусене хутшăнма ирĕк илчĕ.

Алия Ибатуллина, Раиля Абзяппарова, Гульшат Гимранова, Таня Уткина, Эльмира Садыкова (вылякан тренер) - пурте 2-мĕш номерлĕ шкултан, Светлана Имукова (ЦРБ) лайăх выляннине палăртса хăвармалла.

Хĕрсем финалта та пирĕн район чысне ăнăçлă хӳтĕлессе шанас килет.

Х.ФАТУЧЕВ.



## Раççей

*Çĕршывăм Раççей*
*Пирĕн пысăк кил.*
*Санпа çеç телей -*
*Чĕререн пехил.*
*Савар пĕр-пĕрне*
*Ĕмĕр-ĕмĕрне*

*Пултăр юрату*
*Йышлă çемьере,*
*Килĕшӳ, тату*
*Пĕтĕм тĕнчере.*
*Туслăх пар, Турă,*
*Пурăнма ырă.*

*Çĕршывăм пултăр*
*Улăппала тан.*
*Çирĕп сыхлатпăр*
*Ютри тăшмантан.*
*Мирлĕх пар, Турă,*
*Пурăнма ырă.*

*Хĕв.Савгачев.*

## Пĕлтерӳ

*1989 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 васкавлă сутăнать. Советская урамĕнчи 9-мĕш номерлĕ çуртра ыйтса пĕлмелле.*

*Хăна юррисем*

## ШУРĂМПУÇПЕ ШĂПЧĂК ЮРĂ ЮРЛАТЬ

Акнă уçăм начар, ай, пулсассăн,
Çулталăка пырать ун хуйхи.
Çумри мăшăр начар, ай, пулсассăн,
Ĕмĕрлĕхе пырать ун хуйхи.

Шурăмпуçпе шăпчăк юрă юрлать
Пирĕн савнă кайăк пуласшăн.
Кунĕпе те çĕрĕпе ĕçлетпĕр
Атипе анине юрасшăн.

Аслă ĕшнере утă, ай, çулаççĕ
Ылтăн турилккесен çутипе.
Ылтăн турилккене эп тытас çук,
Эпĕ тăвансене юрас çук.

Кăвакарчăн кăвак, чĕкеç хура,
Мĕншĕн турри пĕр пек туман-ши?
Эсир лайăх, тăван, эпир начар,
Мĕншĕн турри пĕр пек туман-ши?

Укăлчанăн хăми пилĕк хăма,
Шултăркарĕ кăçалхи уярта.
Çамрăках та пуçăм, нар пек сăнăм
Шуралайрĕ йывăр хуйхăпа.

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.

# Пĕлтерӳсем

3,5х3,5 тата 6х4 калăпăшлă пурасем сутатпăр, хаклă мар. Телефонсем: 4-13-35.

* * *

1992 çулта туса кăларнă "Москвич-2141", усă курнă "Свияга" холодильник сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-13-74.

* * *

Çурта васкавлă сутатпăр е пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 5-23-73.

* * *

Газ, шыв кĕртнĕ çурт сутăнать. Кивĕ Чаллă ялĕнче Зинаида Синдряковаран ыйтса пĕлмелле.

* * *

Хамăр тата ют çĕршывра туса кăларнă теле-видео, аудио аппаратурăсем юсатăп, гаранти паратăп. Советская урамĕнчи 108-мĕш хваттерте е 5-29-03 телефонпа шăнкăравласа Александр Федоровичран ыйтса пĕлмелле.

* * *

Газ колонки сутăнать. Телефон: 5-42-19.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-16-62.

* * *

1992 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 сутăнать, çутă хăмăр тĕслĕ, 67 пин километр çӳренĕ, лайăх шайра. Адрес: Кушкă ялĕ, Молодежная урамĕнчи 9-мĕш çурт. Телефон: 2-12-49.

* * *

Арболитран тунă 9,60х9,0 калăпăшлă çурт комплекчĕ сутăнать. Телефон: 5-21-62.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер кирлĕ. Телефон: 5-25-50.

* * *

1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутăнать. Телефон: (ĕçри) 2-16-09, 8.00 сехетрен тытăнса 17.00 сехетчен шăнкăравласа пĕлме пулать.

* * *

1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр. Адрес: Южная,25. Телефон: 2-11-24.

* * *

4-мĕш номерлĕ шкул хыçĕнче паха гараж сутăнать. Телефонсем: 65-8-43, 65-2-87.

* * *

Хăвăрăн материалăрсенчен çуртсем, гаражсем, верандăсем тăватпăр (паха). Телефон: 5-16-25 (Назипа ыйтмалла).

* * *

"Свияга-404", "Свияга" морозильник сутатăп, хакĕ 1 пин те 800 тенкĕ. Адрес: Муса Джалиль урамĕнчи 28-мĕш çурт. Телефон: 2-20-79.

* * *

Кивĕ Амзя ялĕнче кирпĕчрен тунă çурт сутăнать. Адрес: Школьная урамĕ, 4-11. Телефон: 46-2-33.

* * *

Чугун çул поселокĕнче сӳтсе каймалли çурт, çуна çинчи гараж, "ИЖ-Планета-5" (кӳмеллĕ) сутатпăр, хаклă мар. Советская урамĕнчи 139-мĕш номерлĕ çуртри 5-мĕш хваттерте 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.

* * *

Ульяновск хулинчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пекех хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 4-29 е Промышленная урамĕ, 2-2.

* * *

Куйбышев урамĕнчи 3 пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе хушса тӳлесе улăштаратпăр.

Гиматдинов урамĕнчи магазин (нефтебаза çывăхĕнче) васкавлă сутăнать. Телефон: 5-39-38.

* * *

"Москвич-2140" васкавлă сутăнать, хаклă мар. Тарн-Варн поселокĕнчи Г.И.Васильевран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 5-27-88.

* * *

Лайăх шайри ВАЗ-2101 сутăнать. Тури Нурлатри Фатучевран ыйтса пĕлме пулать. Телефон: 2-16-53 (ĕçри).

* * *

ВАЗ-21083 сутатпăр. Адрес: Советская урамĕ, 108-4. Телефон: 2-12-50.

* * *

1987 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 сутăнать. Адрес: Ветстанци, Линейная урамĕ, 38-1.

* * *

Хырăран тунă çурт - 6х6 метрлă пура сутăнать. Адрес: Лобачевский урамĕ,67.

* * *

Уйрăм çурта пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Декабристсен урамĕ,11.

* * *

Çыранçи Чаллăри икĕ пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе хушса тӳлемесĕрех улăштаратпăр. Адрес: ЗЯБ поселокĕ, 15/29, 75-мĕш номерлĕ хваттер.

* * *

Лайăх шайри ВАЗ-21013 сутăнать. Адрес: Гоголь урамĕ, 15-мĕш номерлĕ çурт.

* * *

Бортлă ЗИЛ-130 сутатпăр. Пушкин поселокĕнчи Таймуллинсенчен ыйтса пĕлмелле.

* * *

Çула çитмен çамрăксен велосипедне туянатпăр. Телефон: 5-15-91.

# Пĕлтерӳсем

"Надежда" ПП йӳнĕ хаксемпе фотоуслугăсем сĕнет:

- документсем валли сăнӳкерчĕксем, 20 минут хушшинче хатĕр пулать, калăпăшĕсем: 2х3см; 3х4; 3,5х4,5; 6х7 тата ыттисем те;
- тĕрлĕ тĕслĕ сăнӳкерчĕксем ("Кодак"), 2х3 см пуçласа 30х40см. çити, икĕ сехет хушшинче хатĕр пулать;
- фотоаппаратсене юсаççĕ.

Палăк валли портрет (13х18см) хатĕрлеме заказсем йышăнаççĕ, металлокерамика.

10-15 кун хушшинче туса параççĕ. Хакĕ 90 тенкĕрен пуçласа. Адрес: Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 1-мĕш хут.

* * *

"Иж-Планета 5" мотоцикл васкавлă сутăнать. Адрес: Тельман урамĕ, 25-2.

* * *

1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутăнать. Адрес: Мир урамĕ, 4-1.

* * *

37-мĕш СМУн 2-мĕш участокне автокрановщик васкавлă кирлĕ. Адрес: Мамăк ялĕ, битум завочĕ, телефон: 2-10-27.

* * *

Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттере икĕ тата пĕр пӳлĕмлисемпе е хушса тӳлесе икĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Советская урамĕ, 185-13, телефон: 5-20-26.

* * *

40 лет Октября урамĕнчи 18-мĕш çурт сутăнать.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере Димитровградри çавăн пеккипех улăштаратпăр е сутатпăр. Телефон: 2-19-22.

* * *

"СВАБ" ООО артезиан скважинисене тĕпрен улăштарса юсать!

юсаса çĕнетесси, сийсем шыв парассине ӳстересси, забоя хăйăртан тасатасси, фильтра тасатасси, насус оборудованине улăштарасси.

Лицензи номерĕ 5030

Адрес: Нурлат хули, НГДУ "Нурлатнефть", ЦКПРС промбази, "СВАБ" ООО, пром. телефон: 65-6-63.

* * *

"Нурлат-Нефтьинвест" акционерĕсене пĕлсе тăма
1996 çулшăн дивидендсем тӳлетпĕр.
Адрес: К.Маркс урамĕ, 12.

* * *

*Предприяти 30 сантиметр тăршĕллĕ чăн-чăн çӳç хаклă хакпа сутăн илет. Çӳçе пĕр кун кăна - июнĕн 16-мĕшĕнче 9.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен Йăла çурчĕн парикмахерскийĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Школьная урамĕ, 22-мĕш çурт . Лицензи АВ, номерĕ - 01558610.*

## Тав тăватпăр

"Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО, район хаçачĕн редакцийĕпе хулари типографи коллективĕсене, тăвансемпе çывăх çынсене, кӳршĕсене пирĕн юратнă аттене, ывăла, пиччене Константин Иванович Кубасова пытарма пулăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватпăр.

Кубасовсен çемйи.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацине пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. 2339.